**Чăваш Республикин**
**вĕренӳ тата çамрăксен**
**политикин министерстви**

**Министерство образования и**
**молодежной политики**
**Чувашской Республики**

# ПРИКАЗ

14.03.2013 № 572

Шупашкар хули                                                  г. Чебоксары

Наци культурин «Туслăх хĕлхемĕ»
республика фестивальне 2013 çулта
хатĕрленсе ирттерессси çинчен

Шкул ачисен чăваш чĕлхипе литературине вĕренес кăмăлне çĕклес, чăваш чĕлхине тĕпчес енĕпе пултаруллă ачасене тупса палăртас тĕллевпе çакнашкал ĕç тума хушатăп:

1. Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕпе тата Чăваш наци конгресĕпе пĕрле 2013 çулхи пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 19-мĕшĕччен наци культурин «Туслăх хĕлхемĕ» республика фестивальне ирттерес.

2. Наци культурин «Туслăх хĕлхемĕ» республика фестивалĕн положенине (йĕркине) çирĕплетес.

3. «Туслăх хĕлхемĕ» республика фестивальне ирттермелли тăкаксене саплаштарма укçа-тенкĕ вĕренĕве Чăваш Республикинче 2011-2020 çулсенче аталантармалли тĕллевлĕ программăна пурнăçа кĕртме 2013 çул валли уйăрнă тăкак сметинчен илмелле.

4. Наци культурин «Туслăх хĕлхемĕ» республика фестивальне йĕркелесе методика енчен ертсе пыма Чăваш Республикин вĕренӳ институтне хушас.

5. Вĕренӳ управленийĕн органĕсен, вĕренӳ учрежденийĕсен ертӳçисем шкул ачисене наци культурин «Туслăх хĕлхемĕ» республика фестивальне хутшăнма пĕтĕм май туса памалла.

6. Хушупа мĕнле ĕçленине эпир хамăр тĕрĕслесе тăрăпăр.

Министр çумĕ                                                  С.В.Петрова

Хушса пани (А)

**Наци шкулĕнче веренекен ачасен**
**«Чăвашлăх тĕнчи» мультимеди презентаци конкурсĕ**

**Конкурс тĕллевĕсемпе задачисем:**

– ачасене Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн паллă çыннисен пултарулăхĕпе паллашма майсем тупса парасси;

– ачасен пултарулăхне аталантарасси.

**Тĕпчев ĕçĕпе презентацин тематики**

Тĕпчев ĕçĕпе унăн презентацийĕн тематики пĕтĕмпе тăваттă:

1. „И.А.Андреев профессор – шкул учебникĕсен авторĕ"

2. „М.И.Скворцов профессор – словарь ăсти"

3. „Ачасем валли çыракан хĕрарăм çыравçă (В.Эльпи писатель 100 çул тултарнă май)"

4. „Чăвашсен çут çанталăка упрас ыйтăва тапратнă çыравçисем, вĕсен хайлавĕсем"

Тĕпчев ĕçне тăватă темăран пĕрне суйласа илсе чăвашла çырмалла.

**Конкурса хутшăнакансем**

Вăйă конкурса республикăн тата республика тулашĕн наци (чăваш) шкулĕсенче 7-9 классенче вĕренекен ачасем хутшăнаççĕ.

**Конкурса йĕркелени тата ирттерни**

Конкурс икĕ тапхăрпа иртет – районта (хулара) тата республикăра:

– районта (хулара) 2013 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕччен;

– республикăра 2013 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче.

Конкурсăн республика тапхăрне хутшăнма районта (хулара) малти вырăна тухнă ачана ирĕк параççĕ (1 çын). Конкурса хутшăнакан ачан хăйĕн тĕпчев ĕçне 5-7 минут хушшинче презентаци тумалла тата жюри членĕсен ыйтăвĕсене хуравламалла.

Районта (хулара) çĕнтернĕ ачасем çинчен сведени (шкул, класс тата учитель ячĕпе хушаматне туллин кăтартмалла) ăсату хучĕпе пĕрле тата CD-R/RW диск çине çырнă 1) тĕпчев ĕçĕпе (Microsoft Wordpa) 2) асăннă ĕçĕн мультимеди презентацийĕпе (Power Pointpa) йĕркелӳ комитетне **2013 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕччен** çак адреспа ярса памалла: Шупашкар хули, М.Горький проспекчĕ, 5-мĕш çурт, чăваш филологийĕпе этнокултура вĕрентĕвĕн кафедрипе лабораторийĕ, 225-мĕш кабинет. Электрон почта адресĕ chrio11@cap.ru.

Жюри ачасен ĕçĕсене хакланă чухне çак енсене пăхать:

– ума лартнă задачăн паян кунхи пĕлтерĕшлĕхне

– пурнăçлакан задачăн çĕнĕлĕхне

– тĕпчев ĕçĕпе задачăна пурнăçламалли хăйне евĕрлĕ меслетсене

– тунă ĕçсен çĕнĕлĕхне

– ĕçĕн наукăпа практика пĕлтерĕшне

– тĕпчевпе тишкерӳ шайне, ума лартнă тĕллеве татса панине

– пĕтĕмлетӳсен конкретлăхне тата шайне

– материала каласа пама тата автор хăйĕн материалне туллин пĕлнине

– ĕçĕн шал тата тул курăмлăхне

Хушса пани (Ă)

**Вырăс шкулĕнче вĕренекен ачасем валли чăваш чĕлхипе, литературипе тата культурипе irttерекен «Çăлтăрчăк» вăйă конкурс**

**Вăйă конкурс тĕллевĕсемпе задачисем**

– чăваш чĕлхипе культурине вĕрентнин пĕлтерĕшне ӳстересси;

– вĕренекен ачасене халăх культурипе, ăс-хакăлпа шухăш-кăмăл пуянлăхĕпе паллаштарасси;

– шкул ачисене чăваш чĕлхипе тĕпчев ĕçне явăçтарасси;

– чăваш чĕлхипе класс тата шкул тулашĕнчи ĕçсене вăйлатасси.

**Вăйă конкурса хутшăнакансем**

Вăйă конкурса республикăн тата республика тулашĕн вырăс шкулĕсенче 7-9 классенче вĕренекен ачасем хутшăнаççĕ.

**Вăйă конкурс станцийĕсем**

Вăйă конкурса irttермелли станцисем пĕтĕмпе пиллĕк:

1. «Чĕлхе – халăх мулĕ» – чăваш чĕлхи (тест);

2. «Илемлĕх тĕнчи» – чăваш литератури (чăваш литератури классикĕсен хайлавĕсене илемлĕ вулани);

3. «И.Я.Яковлев – чăваш халăхне çутта кăларакан» – И.Я.Яковлев пурнăçĕпе пултарулăхĕн паллă тапхăрĕсем, унăн вĕренекенĕсем (тест);

4. «Тупмалли юмахсемпе ваттисен сăмахĕсем» – чăваш чĕлхи (тест);

5. «Пирĕн пултарулăх» – ачасен пултарулăх тупăшăвĕ: юрă юрлани, ташă ташлани, харпăр хăй сăввисене вулани т.ыт.те.

**Вăйă конкурса йĕркелени тата irttерни**

Вăйă конкурс икĕ тапхăрпа иртет – районта (хулара) тата республикăра:

– районта (хулара) 2013 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕччен;

– республикăра 2013 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче.

Вăйă конкурсăн республика тапхăрне хутшăнма районта (хулара) малти вырăна тухнă ачана ирĕк параççĕ (1 çын). Районта (хулара) çĕнтернĕ ачасем çинчен сведени (шкул, класс тата учитель ячĕпе хушаматне туллин кăтартмалла) ăсату хучĕпе пĕрле йĕркелӳ комитетне **2012 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕччен** çак адреспа ярса памалла: Шупашкар хули, М.Горький проспекчĕ, 5-мĕш çурт, чăваш филологийĕпе этнокультура вĕрентĕвĕн кафедрипе лабораторийĕ, 225-мĕш кабинет. Электрон почта адресĕ chrio11@cap.ru.

«Çăлтăрчăк» вăйă конкурса палăртнă станцисемпе районта (хулара) irttерме ыйтусене вĕренӳ управленийĕсем тăваççĕ. Конкурса хутшăнакан кашни ачан пур станцие те иртмелле.

Вăйă конкурсăн республика тапхăрĕн çĕнтерӳçине республика конкурсĕн жюрийĕ палăртать.

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсене халăха массăллă информаци хатĕрĕсемпе пĕлтереççĕ.

Хушса пани (Б)

**«Шевле – 2013»**
**Çеçпĕл Мишши поэзине халалланă ÿнер ăсталăхĕн конкурсĕ**

**Конкурс тĕллевĕсем**: пултаруллă çамрăксене тупса палăртасси тата пулăшасси, çамрăк ăрăва пархатарлă чунлăхпа патриотизм туйăмĕ майлă ÿстересси.

**Йеркелекенсем:** Чăваш Республикин вĕренÿ тата çамрăксен политикин министерстви тата Хушма профессии вĕренĕвĕн (квалификации ÿстермелли) бюджет учреждений. «Чăваш Республикинчи вĕренÿ институчĕ».

**Конкурса хутшăнакансем:**

Конкурса пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вĕренÿ учрежденийĕсен 6-9 класĕсенче вĕренекенсем хутшăнаççĕ.

Конкурса йĕркелесе ирттересси:

Конкурс икĕ тапхăрпа иртет: район (хула) тапхăрĕ тата республика тапхăрĕ:

- район (хула) тапхăрĕ – 2013 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕччен;

- республика тапхăрĕ – 2013 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче.

Конкурсăн республика тапхăрне район тапхăрĕнче çĕнтернĕ пĕр ача кăна хутшăнать. Район тапхăрĕнче çĕнтернĕ вĕренекен çинчен кирлĕ даннăйсене тата унăн ĕçне (1 ÿкерчĕк) ăнлантару çырăвĕпе пĕрле (шкул ятне, хăш класра вĕреннине, учитель ятне кăтартса) оргкомитета 2013 çулхи апрелĕн 17 мĕшĕччен çак адреспа ярса памалла: Шупашкар хули, Горький проспекчĕ, 5, обществăлла дисциплинăсен кафедри, 226-мĕш кабинет.

Телефон: 8(8352) 45-07-44, 8(8352) 45-07-44.

Конкурсăн республика тапхăрне хутшăнакансен панă темăпа, паллă вахăт хушшинче ÿкерчĕк хайламалла пулать.

Материала конкурса хутшăнакан хăй суйласа илет: акварель, гуашь, тушь, кăранташ е ыт. Хут формачĕ А-4 е А-3 (кашни хăй суйласа илет).

Конкурсра çĕнтерекене Пĕтем тĕнчери «Орленок» ача-пăча центрне кайма путевка параççĕ.